# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ — 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

*51 (8817) №* * *Юнкун, 2020 çулхи утă (июль) уйăхĕн 8-мĕшĕ* * *Хакĕ ирĕклĕ*


**Ял хуçалăхĕ**

## Ĕне усраканшăн пулăшу вырăнлă пулчĕ

**Çĕртме уйăхĕн 8-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçне вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев килти хушма хуçалăхра ĕне тытнăшăн пулакан тăкаксен пĕр пайне саплаштарма республика бюджетĕнчен патшалăх пулăшăвĕ уйăрма сĕннĕ. Вăл палăртнă тăрăх, укçа-тенкĕ пулăшăвĕ çапла майпа пайланмалла: пĕр ĕнешĕн – 2300 тенкĕ, 2 ĕнешĕн кашни пуçне – 3300 тенкĕ, 3 е ытларах ĕнешĕн – 4300 тенкĕ.**

Асăннă пулăшупа республикăра пурĕ 22 пин хушма хуçалăха тивĕçтерме палăртнă, вĕсенче пĕтĕмпе ял хуçалăх ĕçченĕсем 56 пин ытла пуç ĕне тытаççĕ. Çакна валли республика бюджетĕнчен пĕтĕмпе 185 миллион тенкĕ укçа уйăрма, ăна çынсем патне çĕртме уйăхĕн вĕçĕнче çитерме палăртнă.

Çӳлерех асăннисене тĕпе хурса хушма хуçалăхра ĕне усракан ял ĕçченĕ маларах асăннă вăхăтра патшалăх пулăшăвне алла илме пултарчĕ, вĕсен банк счечĕсем çине укçа саплаштарăвĕ куçрĕ. Район администрацийĕн экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕн пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, ял тăрăхĕсен администрацийĕсем хушма хуçалăх тытса пыракан çынсенчен 3107 заявлени 4522 пуç ĕнешĕн йышăннă. Заявлени çырнисем пĕтĕмпе республика бюджетĕнчен 13750600 тенкĕ чухлĕ пулăшу илме пултарнă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Çырăнтару – 2020**

## Малалла çырăнтараççĕ

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата малалла çырăнтараççĕ. Пилĕк уйăха çырăнмалли хак – 400 тенкĕ те 5 пус.**

**Хаçата кирек хăш уйăхран тытăнса та çырăнса илме пулать. Кун пирки почтальонсене çеç пĕлтерĕр, вĕсем вара сирĕн пата пырсах çырăнтарĕç.**

**Редакци.**

## Ăнланупа килĕшӳ - яланлăха



*Сăн ӳкерчĕкре Оринин ялĕнче пурăнакан Захаровсен туслă та хисеплĕ çемйине куратăр. Захаровсем – мал ĕмĕтлĕ тата тăрăшуллă çынсем. Çемье пуçĕ Николай Валерьевич районти газ хуçалăхĕнче слесарь водительте тăрăшать. Екатерина Валерьевна Оринин ял библиотекин ертӳçинче тимлет, хаçата тĕрлĕ статья çырма кăмăллать. Максимпа Юлия Оринин вăтам шкулне çул такăрлатаççĕ, тăрăшса вĕренеççĕ, олимпиадăсемпе конкурссене хутшăнса малти вырăнсене йышăнаççĕ.*

*Захаровсене Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕпе ăшшăн саламласа ăнăçу сунатпăр. Екатерина Валерьевнăна район хаçачĕпе чылай çул туслă çыхăну тытнăшăн тав тăватпăр.*

***Р. ИЛЛАРИОНОВА.***

**Республикăра**

## Программăпа паллашма тăрăшăр

**Чăваш Енĕн 2020 – 2025 çулсенчи экономикипе социаллă пурнăç аталанăвĕн комплекслă программине июнĕн 24-мĕшĕнче Экономикăн аслă канашĕн ларăвĕнче пахаларĕç.**

Çак программăпа халĕ кашни çын паллашма пултарать. Ăна республика влаç органĕсен порталĕнче, Экономика аталанăвĕпе пурлăх хутшăнăвĕсен министерствин сайтĕнче вырнаçтарнă.

Каласа хăвармалла, программăна муниципалитетсенче сӳтсе явас ĕç те пуçланнă. Вырăнти канашлусене республика ертӳçи Олег Николаев хăй хутшăнать.

**«Чувашинформ» ИА.**

## Суйлав ыйтăвĕсемпе

**Кăçал сентябрĕн 13-мĕшĕнче, суйлавăн пĕрлехи кунĕнче, эпир Чăваш Ен Пуçлăхне, çавăн пекех район тата ял тăрăхĕсен депутачĕсене суйлатпăр.**

Çавна май ĕнер республикăра çитес суйлавчченхи кампанипе çыхăннă хăш-пĕр ыйтăва сӳтсе яврĕç. Республикăн информполитика министрĕ Михаил Анисимов тата Тĕп суйлав комисси представителĕ Олег Ефимов республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен ертӳçисемпе тӳрĕ калаçу йĕркелерĕç. Вăл видеоконференцçыхăну мелĕпе иртрĕ.

Суйлавчченхи кампанире халĕ кандидатсене регистрацилес вăхăт пырать, хыççăн вара агитаци тапхăрĕ пуçланмалла. Çак тапхăрта ĕнтĕ кандидатсем суйлавçăсене хăйсем пирки активлăрах пĕлтереççĕ.

Çавна май канашлура республикăри массăллă информаци хатĕрĕсенче кандидатсем пирки калакан информацие пичетлемелли йĕркене сӳтсе яврĕç. Кандидатсем хăйсен материалĕсене тӳлевлĕ тата тӳлевсĕр майсемпе шăпа туртнипе килĕшӳллĕн пичетлеме пултарнине палăртрĕç. Çак материалсене регистрациленнĕ электрон массăллă информаци хатĕрĕсенче пичетлессин йĕрки пирки те сăмах хускатрĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Симĕс ĕç çи – 2020**

## Выльăх апачĕ янтăлаççĕ

Çанталăк выльăх апачĕ хатĕрлеме питех те меллĕ. Район администрацийĕн экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕн пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра пĕрлешӳллĕ кооперативсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем ытларах выльăх апачĕ янтăлассипе тимлеççĕ, хĕле хатĕрленеççĕ.

Хуçалăхсем асăннă пая тăратнă оперативлă кăтартусем тăрăх, июлĕн 7-мĕшĕ тĕлне нумай çул ӳсекен курăксене пĕтĕмпе 3844 гектар çинче çулнă, 4825 тонна утă типĕтсе янтăланă.

Хуçалăхсем сенаж çинче те анлăн ĕçлесе пыраççĕ. Çак вăхăт тĕлне вĕсем 8800 тонна сенаж хывса хатĕрленĕ.

**Р. МАКАРОВА.**

**Патшалăх пулăшăвĕ**

## 100 пин тенкĕпе усă курма хатĕр

**Чăваш автономине туса хунăранпа 100 çул çитнĕ ятпа Чăваш Ен Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаевăн йышăнăвĕпе кашни яла 100-шер пин тенкĕ параççĕ.**

Ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов ку эрнери тунтикунхи канашлура республикăн пур муниципалитетĕнче те ялсене уйăрса паракан 100-шер пин тенкĕпе епле усă курасси пирки шухăшсене палăртнине каланă. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, республикăра 1873 проекта ырланă. Вĕсенчен 1712-шĕ – ял тăрăхĕсен территорийĕсенче, 161 проект – хула поселенийĕсенче, пĕчĕк хуласенче тата хула таврашĕсенче пурнăçа кĕртмеллисем.

Республикăра пурăнакансенчен ытларахăшĕ çак укçа-тенке ача-пăча (выляв, спорт) площадкисене йĕркелеме усă курас шухăшлă иккен. Хыççăнхи «вырăнсенче» – пурăнакан çĕрте тирпей-илем ыйтăвĕсене татса парасси, стелăсем лартасси, урамсенче электричество çутипе тивĕçтересси, çуртсен картиш территорийĕсене хăт кĕртесси тата ытти те.

Министр каланă тăрăх, ку эрнере муниципалитетсен хăйсен проекчĕсене Ял хуçалăх министерствине тăратмалла. Вăхăта тăсса ямасăр, çитес кунсенчех вара укçа-тенкĕ уйăрасси пирки постановлени те кăларма планланă.

Муркаш районĕнче 16 ял тăрăхĕ. Кашнинче ял шучĕ те, ялсенче пурăнакансен шухăшĕ те тĕрлĕрен.

Акă, сăмахран, Оринин ял тăрăхĕнче 14 ял вырнаçнă. Унта пурăнакансем те хăйсен шухăшне вăхăтра пĕлтернине каларĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валентина Пушкова. Мĕн тума палăртнă-ха орининсем патшалăх пулăшăвĕн укçи-тенкипе?

– Сентимĕр тата Лантăш ялĕсенче пурăнакансем ача-пăча площадкине йĕркелес шухăша палăртрĕç. Атапай, Пиккикасси, Пăсăрман, Патаккасси, Чамăш, Оринин, Мулкачкасси, Тереç ялĕсенче пурăнакан çынсем хăйсен ялĕсем тавра карта тытма йышăнчĕç. Семенкассисем çак укçа-тенкĕпе ялта сцена тăвас кăмăллине çирĕплетрĕç. Лапкас тата Çĕньял Оринин ялĕсенче икшер çăл туса лартмалла. Вăрманкасси ялĕнче спорт площадки йĕркелеме палăртрĕç, – пĕлтерчĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.

Çапла Оринин ял тăрăхĕнчи кашни ялтах ырă улшăну пулĕ. Чи пĕлтерĕшли – пуринче те укçа-тенкĕпе çынсем хăйсем мĕнле усă курассине шута илнĕ.

Пĕтĕмĕшле вара районĕпех çакăн евĕр ырă «ӳкерчĕк» пулмалла.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Саламлатпӑр**

Юратнӑ та хаклӑ ҫыннӑмӑра – Ита-качкасси ялӗнче пурӑнакан **Ирина Ивановна КРАСИЛЬНИКОВӐНА** 60 ҫулхи



юбилейпа чун-чӗререн тухакан чи ырӑ та ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Тӗнчери мӗнпур ыррине сунатпӑр сана – тулӑх пурнӑҫ, тулли телей те ӑнӑҫу. Яланах хаваслӑ та чунупа ҫамрӑк пул, чир-чӗр мӗнне пӗлмесӗр тӑван кил ӑшшине упраса нумай ҫул пурӑн.

**Саламₚа: ывӑлӗпе кинӗ, хӗрӗпе кӗрӳшӗ, тӑватӑ мӑнукӗ, сывӑх тӑванӗсем.**

**Ҫырав**

# Ҫырава 2021 ҫула куҫарнӑ

**2020 ҫулхи октябрь уйӑхӗнче ирттерме палӑртнӑ Пӗтӗм Раҫҫейри халӑх ҫыравне 2021 ҫулхи апрель уйӑхне куҫарнӑ. Ҫакӑн пирки калакан постановление РФ Правительствин ертӳҫи Михаил Мишустин июнӗн 30-мӗшӗнче алӑ пусса ҫирӗплетнӗ. Росстат представителӗсем ҫӳлерех асӑннӑ ӗҫе ирттерес тапхӑра куҫарнине коронавирус инфекцийӗ сарӑлнӑ вӑхӑтра ҫырава хатӗрленессине пахалӑхлӑ йӗркелеме май килменнипе сӑлтавлаҫҫӗ.**

– Кун пек йышӑнӑва пирӗн ҫӗршыв кӑна туман. Ытти ҫӗршыври статистика службисем те ҫырава куҫарнине пӗлтереҫҫӗ. Вӑл шутра США, Аргентина, Бразили тата ыттисем, – ҫапла палӑртнӑ хӑйӗн шухӑшне Росстат ертӳҫи Павел Малков.

Ҫитсе килме уйрӑмах йывӑр кӗтессенче пурӑнакансем патӗнче ҫырав кӑҫалхи октябрь уйӑхӗнче пуҫланать. Ӑна валли Росстата планшетсемпе сентябрь уйӑхӗнче тивӗҫтерме пуҫлӗҫ.

Ҫыравӑн малтанхи пӗтӗмлетӗвӗ 2021 ҫулхи кӗркунне паллӑ пулӗ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА хатӗрленӗ.**

**Конкурс**

# Ильинка ял тӑрӑхӗ палӑрнӑ

**Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ – экономика аталанӑвӗпе пурлӑх хутшӑнӑвӗсен министрӗ Иван Моторин ертсе пынипе правительствӑра «Лучшая муниципальная практика» Раҫҫей конкурсӗн регион тапхӑрне пӗтӗмлетнӗ.**

Конкурс ҫӗнтерӳҫисемпе призерӗсене тӗрлӗ номинацире палӑртнӑ. «Муниципальная экономическая политика и управление муниципальными финансами» номинацире Муркаш районӗнчи Ильинка ял тӑрӑхӗ 3-мӗш вырӑн йышӑннине пӗлтернӗ.

**Пирӗн календарь**

# Полтава патӗнчи ҫӗнтерӳ

**Июлӗн 10-мӗшӗ** – Раҫҫей ҫар мухтавӗн кунӗ. Ҫав кун 1709 ҫулта Пӗрремӗш Петӗр патша ертсе пынипе вырӑссен ҫарӗ Полтава патӗнчи ҫапӑҫура шведсен ҫарне ҫапса аркатнӑ. «Паян, халӗ Тӑван ҫӗршыв шӑпи сирӗнтен килет», – тенӗ Пӗрремӗш Петӗр ҫар ҫыннисем умӗнче ҫапӑҫу пуҫланас умӗн. Полководецсен ӑсталӑхне тата вырӑс салтакӗсен хӑюлӑхӗпе паттӑрлӑхне хирӗҫ шведсем нумай тытӑнса тӑрайман.

**Суйлав – 2020**

# Шупашкарта Олег Николаева пулӑшакан Халӑх штабӗ уҫӑлчӗ



**Июлӗн 2-мӗшӗнче Шупашкарта Ленин проспектӗнчи иккӗмӗш ҫуртра Олег Николаевӑн Халӑх штабӗ уҫӑлчӗ. Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗн должноҫне суйланас текен кандидата пулӑшма унпа пӗр шухӑшлисем пуҫтарӑнчӗҫ.**

Тӗл пулӑва «НПК «Элара» акционер пӗрлешӗвӗн генеральнӑй директорӗн ҫумӗ Наталия Партасова уҫрӗ:

«Эпир кунта Чӑваш Республикин ертӳҫин ҫитес суйлавӗнче хамӑрӑн шухӑша палӑртас тесе пуҫтарӑнтӑмӑр. Халӗ Виктор Цой сӑмахӗсене аса илетӗп: «Пирӗн чӗресем улшӑнусем ыйтаҫҫӗ. Пирӗн куҫсем улшӑнусем ыйтаҫҫӗ. Улшӑнусем. Эпир улшӑнусем кӗтетпӗр». Эпир вӗсем пуласса ӗненетпӗр. Нумаях пулмасть республикӑн ҫитес пилӗк ҫулти экономикипе социаллӑ пурнӑҫ аталанӑвӗн комплекслӑ программине хатӗрлерӗҫ. Вӑл Чӑваш Ен аталанӑвне старт парӗ».

«Эсир тымарсемпе Чӑваш Енпе ҫыхӑннӑ, сире пирӗн хӗлхепе культура та ҫывӑх. Ҫакӑ сирӗн федераци шайӗнчи ӗҫ опычӗ пуррипе танах пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Эпир – сирӗнпе пӗр шухӑшлисем. Паянхи пӗрремӗш тӗл пулӑва эпӗ Олег Николаевӑн халӑх штабӗн пӗрремӗш пухӑвӗ тесе шутлама сӗнетӗп», – палӑртрӗ вӑл кандидата каланӑ сӑмахӗнче.

Олег Николаев та сӑмах илчӗ. «Тӗрӗссипе калатӑп: манра хумхану, тав туйӑмӗ питӗ пысӑк тата чи пӗлтерӗшли – хавхалану туйӑмӗ пурри. Ҫак хавхалану темиҫе факторпа ҫыхӑннӑ. Кунта кӗнӗ чухне эпӗ кунччен те курса каланӑ чылай ҫамрӑка, волонтерсене куртӑм. Кунсӑр пуҫне залта тӗрлӗ отрасльте вӑй хурса пуян опыт пухнӑ ҫынсене куратӑп. Сирӗнтен нумайӑшӗ – манӑн учительсем, тӗслӗх вырӑнне пулнӑ ҫынсем: хӑшӗсем пек пулас килнӗ, теприсене опытне йышӑннӑ. Хӑшӗсемпе Чӑваш Ен правительствинче пӗрле ӗҫленӗ.

Эпӗ чи малтанах ҫак ҫӗр ҫинчи ҫӑкӑра ҫисе тата сӗте ӗҫсе ӳснӗ вырӑнти предпринимательсене шанма шутлатӑп. Тӑван ҫӗре вӗсенчен ытла кам юратӗ-ха?

Пулӑшу штабне халӑх штабӗ теме йышӑнни те ҫунат хушать. Каҫарӑр, ҫакӑнпа хамӑн сӑмаха вӗҫлетӗп, хумхану пысӑк», – палӑртрӗ вӑл.

Раҫҫей Геройӗ, спорт кӗрешӗвӗн федерацийӗн президенчӗ Николай Гаврилов республикӑн тӗрлӗ сферӑри пысӑк ҫитӗнӗвӗсем пирки манмалла маррине палӑртрӗ. Вӑл пӗр шухӑшлӑ ытти ҫынпа пӗрле Олег Николаевӑн ҫӗнтерӗвӗшӗн пур вӑя хурса ӗҫлеме шантарса каларӗ. Республикӑн клиника офтальмологи больницин тӗп врачӗ Дмитрий Арсютов коронавирус эпидемийӗ вӑхӑтӗнче, ҫак кӗрешӳре малта медиксем пулнине палӑртса, обществӑн пӗрлӗхӗ ӳснине, волонтерсен «Вместе Пӗрле» юхӑмӗ ҫирӗпленнине каларӗ. Шупашкар хулин Хисеплӗ гражданинӗ, «Промтрактор» ветеранӗ Иван Долгушин ҫакна палӑртрӗ: республикӑра юлашки уйӑхсенче сахал мар ӗҫ пурнӑҫларӗҫ, ку вара пуҫламӑшӗ кӑна-ха. Вӑл Чӑваш Ен Раҫҫейӑн чи лайӑх регионӗ пуласса иккӗленмест.

«Россельхозбанк» филиалӗн директорӗ Ирина Письменская Раҫҫейре унччен пулман ял ипотекин проектне пысӑк хак пачӗ: «Ҫынсен ҫӗр-ҫӗр заявкине тивӗҫтернӗ ӗнтӗ, пӑхса тухас тапхӑрта тата ҫӗр-ҫӗр заявка. Ҫакӑн пек пулӑшу ҫынсемшӗн питӗ пӗлтерӗшлӗ». Вӑрнар аш-какай комбиначӗн президенчӗ Юрий Попов Олег Николаев «Росагролизингпа» алӑ пусса ҫирӗплетнӗ килӗшӳ ҫӗнӗ ял хуҫалӑх техники туянмалли майсене темиҫе хут ӳстернине каласа пачӗ. «Чувашкабель» заводӑн генеральнӑй директорӗ Игорь Кортунов ҫакна аса илтерчӗ: пуҫлӑха суйланас текен кандидат «кӑткӑс лару-тӑрӑва ӑнланма пултарать кӑна мар, хӑй ҫине ответлӑх илме пултаракан ҫын». Шупашкари волонтер центрӗн ертӳҫи Станислав Трофимов пандеми вӑхӑтӗнче йывӑрлӑхсем умне тухса тӑнӑ ҫынсене Чӑваш Ен активисчӗсем пурте пӗрле пулӑшма тытӑннине аса илтерчӗ. «Ыйтӑва татса парассине пӗрле кӳлӗнтӗмӗр, пирӗн ку ӗҫ ӑнӑҫрӗ. Олег Николаев пулӑшма шантарчӗ, эпир пулӑшу кӗтсе илтӗмӗр», – терӗ вӑл.

Чӑваш патшалӑх университечӗн ректорӗ Андрей Александров ҫакна палӑртрӗ: «Тӗл пулу умӗн эпӗ ҫынсем кандидата пулӑшас тӗллевпе алӑ пуснине асӑрхарӑм. Ҫакӑ ӑна шаннине ҫирӗплетет».

Сӑмах май, халӗ Олег Николаев кандидат штабӗсенче уншӑн алӑ пуснине пухаҫҫӗ. Штабсене республикӑри кашни районпа хулара йӗркеленӗ.

Чӑваш Ен Пуҫлӑхне суйланас текен ытти кандидат та суйлавчченхи мероприятисене ирттерме пуҫланӑ. Сӑмахран, КПРФ кандидачӗ Александр Андреев Канашра районти парторганизации членӗсемпе тата вырӑнти ҫынсемпе тӗл пулса каланӑ. Кунсӑр пуҫне вӑл ӑна майлисене ятарласа йӗркеленӗ сайт урлӑ та пуҫтарать. Хӑйӗн кандидатурине хӑй сӗннӗ Юрий Шакеев хӑйӗн майлисенчен алӑ пуснине пухать тата кун пирки социаллӑ сетьсенче каласа кӑтартать. Ҫавӑн пекех кандидатсем муниципалитетсенче депутатсемпе йӗркелекен тӗл пулусене хутшӑнаҫҫӗ.

**«Чувашинформ» информаци агентствин материалӗнчен.**

**Июлӗн 8-мӗшӗ – Ҫемье, юрату тата шанчӑклӑх кунӗ**

# Маттур ҫемье



**Ҫемье – патшалӑх тӗрекӗ, ҫынна ҫемье пурнӑҫра тӗрев парать, кунта ӑнланупа килӗшӳ хуҫаланать. «Аттепе анне пулсассӑн пуринчен те эп пуян» тесе юрлаҫҫӗ чӑваш халӑх юрринче. Чӑнласах, сывӑх ҫынсем пурри – пысӑк пуянлӑх. Ҫамрӑксем аслисенчен тӗслӗх илсе ҫемье чӑмӑртаҫҫӗ, ачасене кун ҫути парнелеҫҫӗ, ура ҫине тӗрӗс-тӗкел тӑратма ӑнтӑлаҫҫӗ.**

Сӑн ӳкерчӗкри Храмовсен ҫемйи – ырӑ тӗслӗхре. Вӗсем Москакасси ялӗнче пурӑнаҫҫӗ. Ҫурла уйӑхӗн вӗҫӗнче мӑшӑр ҫемьеленни 13 ҫул пулать. Ҫемье пуҫӗ Евгений Николаевич Лантӑшри «ДСМ» заводра слесарьте тӑрӑшать. Пултаруллӑ ҫамрӑка ӗҫтешӗсем хисеплеҫҫӗ.

Кил вучахӗн управҫи Екатерина Александровна Лантӑшри пекарньӑра приемщик сдатчикра вӑй хурать, унта чылай тӑрӑшать. Вӑл – тутлӑ апат-ҫимӗҫ ӑсти.

Ҫемьере 2 ача ӳсет. Асли Дарья вӗренӳре «5» паллӑсемпе кӑна ӗлкӗрсе пырать, кӗҫӗнни Матвей 2 класа кайма хатӗрленет. Ашшӗ-амӑшӗ тӑрӑшуллӑ пулнине кура, ачасем пултаруллӑ та хавас ӳсеҫҫӗ. Ҫемье спортпа питӗ туслӑ, май пур чухне вӗсем пӗрле бассейна ҫӳреҫҫӗ, конькипе, йӗлтӗрпе ярӑнаҫҫӗ. Пушӑ вӑхӑта, канӑва усӑллӑ та кӑсӑклӑ ирттерме пӗлеҫҫӗ. Пултаруллӑ ҫынсем пирки ыррине чылай ҫырма пулать.

Храмовсене Ҫемье, юрату тата шанчӑклӑх кунӗ ячӗпе саламланӑ май иксӗлми телей, ҫирӗп сывлӑх, килӗшӳпе ӑнӑҫу сунас килет.

**Е. ЗАХАРОВА сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Суйлав

# Кандидатсем хăйсен программисемпе паллаштарчĕç

***Чăваш Республикин Пуçлăхĕн суйлавĕччен вăхăт икĕ уйăх кăна юлать. Суйлав кампанийĕ кăçал нихăçанхинчен те конкурентлăрах пуласси каламасăрах паллă. Кандидатсем саккăрăн. Вĕсене суйлав кампанине хутшăнма пурне те пĕр тан майсемпе условисем туса пама палăртнă. Асăннă пуçарăва Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев тунăччĕ. Çав тĕллевпе Чăваш Ен муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕ сĕннипе хуласемпе районсенче кандидатсене хăйсемпе, хăйсен программисемпе паллаштарма коммуникаци площадкисем йĕркеленĕ. Çирĕплетнĕ ятарлă графикпа килĕшӳлĕн асăннă площадкăсенче тĕл пулусем июлĕн 3-мĕшĕнче тытăнчĕç ĕнтĕ. Тĕл пулусем июлĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарта вĕçленмелле.***

***Чăваш Республикин Пуçлăхне суйлама тăратнă кандидатсене муниципалитетсен депутачĕсемпе тĕл пулма май туса пани – регионшăн çĕнĕ япала. Çапла майпа кандидатсем муниципалитет фильтрĕ витĕр тухаççĕ.***

Чăваш Республикин Пуçлăхне суйлама тăратнă кандидатсемпе тĕл пулу июлĕн 6-мĕшĕнче Муркаш районĕнче иртрĕ. Депутатсен район Пухăвĕн депутачĕсем, депутатсен ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен депутачĕсем кандидатсемпе тĕл пулма «Централизованная клубная система» муниципалитет бюджет культура учрежденине пухăнчĕç.

Тĕл пулăва сакăр кандидатран пиллĕкĕшĕ хутшăнчĕ. Кусем вĕсем: Александр Андреев депутат (КПРФ), Сергей Матвеев («Патриоты России»), Николай Степанов («Российская партия пенсионеров за социальную справедливость»), çавăн пекех хăйсене хăйсем кандидата сĕннисем Андрей Ильдеменов (уйрăм предприниматель) тата Юрий Шакеев (гражданла активист).

Тĕл пулăва хутшăнакан кашни кандидатах хăйĕн пирки каласа кăтартма, хăйĕн программипе паллаштарма май туса пачĕç.

**Александр Андреев** сăмах пĕрремĕш илчĕ. Суйлава КПРФ-ран хутшăнать. Хăйĕн биографийĕпе паллаштарнă май, Шупашкар районĕнчи Кӳкеç поселокĕнче çуралнине каларĕ. 2005 çултанпа политикăпа çыхăннă. Депутатсен Кӳкеç ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕ пулнă, депутатсен Шупашкар район Пухăвĕн депутатне виçĕ хутчен суйланнă. 2016 çултанпа – КПРФ фракцирен Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ. Хăйĕн программи виçĕ пайран тăнине асăнчĕ: политика, экономика тата социаллă ыйтусемпе çыхăннисем. Политика енĕпе ял тăрăхĕсен, хуласемпе муниципалитетсен пуçлăхĕсене тӳремĕн суйласси патне таврăнмалла тесе шутлать. «Çавăн чухне вĕсем суйлавçăсем умĕнчи хăйсен яваплăхне тӳрремĕнех туйĕç», – тесе палăртать. Референдумсем ытларах иртмелли пирки каларĕ. Экономика тĕлĕшпе илсен, инвесторсем валли уçă условисем туса памаллине палăртрĕ. Социаллă программăсемпе ытларах ĕçлени вара граждансене хăйсен нумай ыйтăвне татса пама пулăшĕ.

Хăйĕн кандидатурине хăй сĕннĕ **Андрей Ильдеменов** Шупашкар хулинче çуралнине пĕлтерчĕ. И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче экономика факультетне, Мускава управлени институтĕн аспирантурине вĕренсе пĕтернĕ. Диссертаци хӳтĕленĕ хыççăн Мускав облаçĕнче ĕçлеме юлнă. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш Ен шăпи уншăн ют мар. Çавăнпах ĕнтĕ вăл регион Пуçлăхне суйлама хăйĕн кандидатурине сĕнес тенĕ. Иккĕмĕшĕнчен, вăл шутланă тăрăх, республикăри экономика лару-тăрăвĕ ансат мар пулни унăн автономине хавшатлатма пултарать. Çавăнпах предприятисене ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшмаллине палăртрĕ. Пĕчĕк тата вăтам бизнеса пулăшупа тивĕçтермеллине уйрăммăн асăнчĕ. Социаллă политика тĕлĕшпе патшалăх тата республика хăйсем çине илнĕ социаллă обязательствăсене пурнăçлама тивĕç тесе çирĕплетет.

«Патриоты России» партирен тăратнă **Сергей Матвеев** çавна каласа пачĕ. Вăл Шупашкар районĕнче çуралнă. Икĕ аслă пĕлӳ илнĕ: техника енĕпе тата финанссем енĕпе. 2015 çулта «Патриоты России» партирен депутатсен Шупашкар район Пухăвĕн депутатне тăратнă. «Манăн позици – республикăра пурăнакан кашни çынна пулăшасси, пĕр çыннăн проблемине те тимлĕхсĕр хăварма юрамасть», – хăйĕн шухăшĕсене çавăн пек палăртрĕ Сергей Матвеев.

«Партия пенсионеров за социальную справедливость» представителĕ **Николай Степанов** Комсомольски районĕнче çуралнă. Студотрядра ĕçленинчен тытăнса Шупашкар хула Пухăвĕн депутатне çити тумхахлă çул утса тухнă. Хальхи вăхăтра Пенсионерсен партийĕн регион уйрăмне ертсе пырать. Унăн шухăшĕпе чи малтанах экономика ĕçĕ-хĕлĕн аудитне иртерес пулать. Малтанхи вăхăтра «пилĕк çуллăхсем» пулнă хыççăн очетсем иртернĕ пек, унăн шухăшĕпе халĕ те ĕç-хĕле çапла майпа йĕркелемелле. Николай Степанов правительствăра профессионалсем кăна пулмалла тесе каларĕ. Виççĕмĕш самант вара – республика правительствин ĕç планне тумаллине калать. Апла пулсан малтан муниципалитетсен планĕсем çине тимлĕх уйăрмалла, кайран кăна укçа-тенкĕ уйăрас пулать. Социаллă çурт-йĕр тăвасси çинче чарăнчĕ, кун пек çурт-йĕрпе хыççăн приватизацилессин йĕркипе чи малтанах врачсене, учительсене тата пĕчĕк тупăшлă граждансене тивĕçтермеллине палăртрĕ.

Хăйĕн кандидатурине хăй сĕннĕ **Юрий Шакеев** Шупашкарта пурăнать, тăвата ача ашшĕ. Общество тата блогер ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă. Аслă вĕренӳ заведенийĕсен экономика тата юридици факультечĕсене вĕренсе пĕтернĕ. Вăл шутланă тăрăх, влаç органĕсем тĕлĕшпе «сывă» критика яланах пулмалла. Хăйĕн ĕçĕпе тĕрлĕ ыйтупа Муркаш тăрăхĕнче пĕрре кăна мар пулни пирки каларĕ.

Хăйсемпе, хăйсен программисемпе паллаштарнă хыççăн кандидатсем тĕл пулăва хутшăннисен ыйтăвĕсене хуравларĕç. Тĕл пулу вĕçленнĕ хыççăн вара депутатсен район Пухăвĕн тата депутатсен ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен депутачĕсен кандидатсемпе куçа-куçăн калаçма май пулчĕ.

Асăнса хăварасшăн, çак вăхăта Чăваш Республикин Пуçлăхне суйлама тăратнă кандидатсемпе муниципалитетсенчи тĕл пулусем Улатăрта, Пăрачкавра, Çĕмĕрлере, Хĕрлĕ Чутайра, июлĕн 6-мĕшĕнчех Етĕрнере те иртнĕ ĕнтĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Республикăра

## Лагерьсем кăçал уçăлмаççĕ

Кăçал Чăваш Енре ачасен сывлăхне çирĕплетмелли лагерьсем уçăлмаççĕ.

Çакăн пек йышăну патне коронавируса сарăлассине хирĕç кĕрешекен оперативлă штабăн июлĕн 3-мĕшĕнчи ларăвĕнче пырса тухнă.

Сывлăха çирĕплетмелли кампанин çуллахи тапхăрне пăрахăçламалли сăлтавсенчен пĕри Чăваш Ен коронавируса пула йышăннă чикĕлевсенчен тухмалли иккĕмĕш тапхăра хальлĕхе куçайманнипе çыхăннă.

Çапла лару-тăрăва пур енлĕ тишкернĕ хыççăн оперативлă штаб кăçал республикăри хула тулашĕнчи лагерьсене уçмалла мар тесе йышăннă. «Лесная сказка» республика ача-пăча санаторийĕ çеç, унта санитарипе эпидемиологи ĕçĕсене пурнăçланă хыççăн, июльтех, ачасене йышăнма пултарĕ. Кунта санаторипе курорт сиплевĕ кирлĕ ачасем хăйсен сывлăхне çирĕплетĕç, санаторире вĕсене кирлĕ сиплевпе тата реабилитаципе тивĕçтерĕç.

**Чăваш Республикин влаç органĕсен порталĕнчен.**

Сăмах – специалиста

## Фантом-предприятисем

**Россельхознадзорăн «Меркурий» тытăмĕ сĕт отраслĕнче кăна пĕлтĕр Раççейĕпе 198 фантом-предприяти тупса палăртнă.**

Мĕне пĕлтерет-ха фантом-предприяти («площадка» тесе палăртаççĕ асăннă системăра)? Чăннипе, çук та вăл. Документсем тăрăх унта продукци хатĕрлеççĕ тата упраççĕ пек. Анчах нимĕнле производство тата склад пирки сăмах пулма та пултараймасть.

Пуринчен ытла вара çакнашкал суя предприятисене Россельхознадзорăн Мускаври, Мускав тата Тула облаçĕсенчи управленийĕ шута илнĕ, пĕтĕмпе – 96.

Фиктивлă предприятисем пирки Россельхознадзор сайтĕнче çырсах тăраççĕ. Акă нумаях пулмасть Чăваш Республикинче те çакнашкал предприятисем тупни çинчен пĕлтерчĕç. Пĕрне Патăрьел районĕнчи предприниматель çине регистрациленĕ пулнă, тепĕр иккĕшне – Вăрмар районĕнчи усламçă çине.

«Меркурийри» кăтартусем тăрăх, вĕсем иккĕшĕ те предпринимательсен ĕç-хĕлне чарса лартнă пулин те, продукцие çаплах йышăннă, çав шутра – сĕт таврашне те. Шел те, кунашкал тĕслĕхсем сахал мар.

Пĕтĕмпе республикăра çултăлăк пуçланнăранпа сĕт отраслĕнче 5 фантом-предприяти тупса палăртнă.

Вĕсене, паллах, ку тытăмра ĕçлеме чарса лартнă. Сĕт отраслĕнче кăна мар, ытти енпе те йĕркене пăснине тăрă шыв çине кăларать «Меркурий». Тытăмра ĕçлеме чарса лартни – йĕркесĕрлĕхпе кĕрешмелли мелсенчен пĕри. Сăмах май, пĕр йăнăшшăнах çапла йышăну кăлармаççĕ, çине-çинех темиçе йăнăш туни çапла тума хистет.

Сăмах май, пĕтĕмĕшле кăçалхи çур çулта ку тытăмра ĕçлеме чарса лартнă 51 тĕслĕхе шута илнĕ.

Ытларах вара, ку системăра продукци срокран тухнă пулин те, вĕсем тĕлĕшпе ветеринари документчĕсем çырса панă тĕслĕхсем тупса палăртрĕç юлашки вăхăтра Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн специалисчĕсем.

Республикăра «Гашение эВСД» текен операцие çаплах пурте пурнăçламаççĕ-ха. Вăл е ку продукци вырăна çитнине пĕлтерекен операци ку.

Специалистсем каланă тăрăх, ытларах кафе е лавкка тытакан предпринимательсем çак «ĕçе» вĕçне çитермеççĕ иккен.

Пусăм тусах калам, çакă йĕркене пăсни шутланать, çавăнпа та штраф тӳлеттерме те пултараççĕ.

**Н. ВАСИЛЬЕВА,**
**Россельхознадзорăн Чăваш Республикинчи тата Ульяновск облаçĕнчи управленийĕн ĕçченĕ.**

Полици хроникинчен 12+

### Ӳсĕрри те, правасăрри те çакланнă

Çул çине водитель прави пулмасăрах е ӳсĕрле тухма юрать тесе шутлакансем районăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пуçĕсене çĕклекелесе пăхаççĕ. Акă Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи пĕр ялта та, Шупашкартан килнĕскер, инспекторсен аллине çакланасса пачах та шутламан пулĕ. Ялта юрать тенĕ-ши шурă кулачă çиекенскер. Кунта вара хулари пек урам нумай мар, инспекторсем пур çĕре те çитеççĕ. Çапла ăна та тытса чарнă. Транспорт хатĕрĕне çӳрес праваран кăçал кăна çултаlăк çурăллăх хăтарнă водитель тĕлĕшпе халĕ уголовлă ĕç пуçарнă.

Теприне вара, çул çине ӳсĕрле руль умне ларса тухнăскере, Юнкă ял тăрăхĕнче тытса чарнă, анчах та вăхăт пĕтĕмпех манăçтарнă курăнать. Ун тĕлĕшпе те уголовлă ĕç пуçарнă.

### Кантăк ватса кĕнĕ

Начар пул та, вăрă ан пул, тенĕ ваттисем. Шупашкар районĕнче пурăнакан çын вара çакна нихăçан та илтмен пулĕ.

Инçех мар пурăннăран вăл Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи пĕр яла çитнĕ. Хăнана кайнă теме çук ăна: питĕрнĕ пӳрте чӳрече кантăкне ватсах кĕнĕ. Хуçи пӳртре хăварнă пăчкă вăрласа тухнă. Тивĕçлĕ кануйри арçыннăн лăпкă пурăнасси текех пулмасть – шалти ĕçсен пайĕнче уголовлă ĕç пуçарнă.

**Пичете РФ Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Шалти ĕçсен пайĕнче

# Вăрланă, кайран каялла тавăрса панă

Çуркунне хурăнлăха хурăн шывне илме кайнăскер, таврăннă чухне Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи пĕр арçын çывăхри усă курман ферма патĕнче тем курах каять. Хĕвел çинче çуталса тăракан япалана патнех кайса пăхма шутлать вăл. Металл рельссем тата ытти тĕрлĕ тимĕр хатĕр выртать иккен. «Çаксем нӳхреп юсанă çĕрте шăп та лăп юрăхлă пулаççĕ», – шухăшласа илет вăл.

Велосипедпа кăна пулнăран арçын тимĕр япаласене тӳрех хурса кайман, анчах та каçалапа кунта таврăннах – тӳлевсĕррине тата никам та усă курманнине епле алăран вĕçертĕн-ха... Машинăпа килнĕскер, вăл тимĕр-тăмăрăн пĕр пайне тиесе кайнă.

Тепринче вара пĕччен килмен – пĕлĕшне те килме ӳкĕте кĕртнĕ. Ачаранпах пĕрле ӳснĕскерпе калаçса татăлма пĕлнĕ. Пĕлĕшĕ следствие каласа панă тăрăх, ăна хăйне тимĕр-тăмăр кирлĕ пулман, ăна пулăшма кăна ыйтнă-мĕн.

Çапла калаçса татăлнă вырăнта тĕл пулса вĕсем машинăпа ферма патне çул тытнă. Çулпа пынă вăхăтра вара ĕçе пуçараканĕ тимĕре хăçан асăрханине тата унпа ăçта усă курас тенине каласа кăтартнă. Вырăна çитсен тимĕр хатĕрсене кĕске вăхăтрах тиенĕ, анчах та тапранса кайма хатĕрленнĕ чухне вĕсен тĕлне икĕ каччă тухса тăнă. Пĕрне арçынсем тӳрех палласа илнĕ – участковăй иккен. Тепри те полицейски пулнине пĕлтернĕ. Çапла арçынсене преступлени тунă вырăнтах тытнă.

Усă курман ферма харпăрçи вара çакăнта тимĕр-тăмăр выртнине лайăх пĕлнĕ. Арçынсем тимĕр тĕлне пуличчен маларах вăл кунта ăçта мĕн выртнине тĕрĕслесе кайнă иккен. Ун чухнех шалта выртнă хăш-пĕр рельс çухалнăран тата хăшĕсем тула «тухса выртнăран», вĕсене вăрласа кайма хатĕрленмен-и-ха текен шухăш та пулнă унăн. Кун пек шикленӳ пурри пирки полицине те пĕлтернĕ, анчах заявлени çырма тăхтаса тăнă.

Арçынсене вырăнта тытса чарнă хыççăн тимĕр вăрлас ĕçе пуçараканăн килĕнче те ферма территорийĕнчи тимĕр-тăмăра асăрханă.

Преступлени тăвакансем хăйсен айăпне туллин йышăнчĕç. Вăрланă металла хуçине пĕтĕмпех тавăрса панă. Çавна май унччен тăкак тӳснĕ харпăрçă гражданла иск та çырмасса пĕлтерчĕ.

Апла пулин те следстви Уголовлă кодексăн 158 статйипе пуçарнă ĕçе тишкерсе преступлени тунине çирĕплетрĕ. Çапах та, иск çырманнине шута илсе, вĕçленĕ ĕçсене суда янă май следстви айăплисене штраф тӳлеттерме ыйтса ходатайствăпа тухрĕ.

**С. ТУРИТОВ,**
**шалти ĕçсен районти пайĕн следстви уйрăмĕн следователĕ.**

**Условия размещения предвыборных агитационных материалов в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» в период избирательной кампании 2020 года по выборам Главы Чувашской Республики**

**Для размещения предвыборных агитационных материалов в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» на бесплатной основе резервируется печатная площадь в размере не менее 10 процентов от общего объема еженедельной печатной площади издания на период с 15 августа по 11 сентября 2020 года.**

**Для размещения предвыборных агитационных материалов в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» на платной основе резервируется печатная площадь в размере не менее 10 процентов от общего объема еженедельной печатной площади издания на период с 15 августа по 11 сентября 2020 года.**

**Стоимость 1 кв. см печатной площади, резервируемой для целей предвыборной агитации, – 115 рублей (без НДС).**

**О дате проведения жеребьевки по распределению печатной площади сообщим дополнительно.**

**Телефон для справок: 62-1-36.**

**Редакция райгазеты.**

## Усăллă канашсем

# Эсир пĕлетĕр-и?

• Ӳте тирĕннĕ шăрпăк е кантăкăн çӳхе ванчăкне темиçе çеккунтрах кăларма пулать. Çакна валли ансăр савăта вĕри шыв (калăпăшĕн 85 проценчĕ чухлĕ) ямалла та шăрпăк тăраннă вырăнна савăта хупламалла. Вĕри пăс шăрпăка туртса кăларать.

• Ваннă хыçлă пуканпа усă курма пулать. Урисене тирпейлĕн касса татмалла, çӳлти пайĕпе вара чуччу тума меллĕ.

• Çакса ямалли чечек куршăкĕсен тĕпне подгузник хурсан, унти тăпра чечек шăварнă хыççăн ытларах вăхăт нӳрĕ тăрать.

• Çулла пахчаранах пĕр-икĕ курка шыв ярса ура çуса кĕретпĕр. Çавна валли ура тупанĕ вырнаçмалăх рама тумалла та ун ăшне лапчăк чулсем пăрахмалла. Çак тăваткал çине тăрсан, ура çуса илме питĕ меллĕ.

---

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Кадастровым инженером Николаевым Андреем Витальевичем, № квалификационного аттестата кадастрового инженера: 21-11-68, от 28.04.2011г., СНИЛС №110-257-732 10, номер регистрации в государственном реестре лиц, осуществляющих кадастровую деятельность 14148, состоящего в некоммерческой саморегулируемой организации Ассоциация «Гильдия Кадастровых Инженеров» №802/10-16 от 13.10.2016г., выполняются кадастровые работы в отношении земельного участка с кадастровым номером 21:17:060401:320, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, с. Большой Сундырь, ул. Мичурина, д. 8.

Заказчиком кадастровых работ является Соколова Алина Владиславовна, проживающая по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, с. Большой Сундырь, ул. Мичурина, д. 8.

Собрание по поводу согласования местоположения границы земельного участка состоится по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, с. Большой Сундырь, ул. Мичурина, д. 8, 08.08.2020г. в 10 часов 00 мин.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Чувашская Республика с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 в межевой организации ООО «Аршин».

Требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с 08.07.2020г. по 08.08.2020г. обоснованные возражения о местоположении границ земельных участков после ознакомления с проектом межевого плана принимаются с 08.07.2020г. по 08.08.2020г. по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Смежные земельные участки, в отношении местоположения границ которых проводится согласование: кадастровый номер 21:17:060401:319, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский р-н, с. Большой Сундырь, ул. Мичурина, д. 8а, принадлежащий Прокопьевой Нине Прокопьевне.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок (часть 12 статьи 39, часть 2 статьи 40 Федерального закона от 24 июля 2007г. №221-ФЗ «О кадастровой деятельности»).

## КУПЛЮ / ТУЯНАТÁП

**КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ЛОШАДЕЙ, ОВЕЦ. ДОРОГО. Старых, молодых в любом состоянии и вынужденный забой. Тел. 8-961-344-03-82. Рома. 10-20.**

* * *

**КУПЛЮ БЫЧКОВ от 10 дней до 600 кг. КОРОВ. ТЕЛОК. ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Тел. 8-937-952-33-80. 3-5.**

* * *

**КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ от месяца на откорм. ДОРОГО. Тел. 8-937-391-23-33. 3-5.**

* * *

**КУПЛЮ бычков от месяца до 550 кг, коров, телок. Вынужденный забой в любом состоянии. Тел. 8-937-951-19-03. 17-31.**

* * *

**Закупаю дорого! КОРОВ, БЫКОВ, ТЕЛОК НА МЯСО. Тел. 8-961-345-77-89. 17-31.**

* * *

**Куплю металлолом дорого!! Сами вывезем, есть газорезка. Тел. 8-960-313-03-79. Сергей. 4-5.**

* * *

**Закупаю бычков, коров, телок и вынужденный забой. Дорого. Андрей. Тел. 8-965-688-01-77. 1-10.**

**Дорого! Куплю бычков, коров, телок. Тел. 8-903-357-72-79, Володя. 1-10.**

**ЗАБОРЫ ИЗ СЕТКИ-РАБИЦЫ, СВАРНОЙ СЕТКИ, ПРОФНАСТИЛА, ЕВРОШТАКЕТНИКА. ВОРОТА, КАЛИТКИ, НАВЕСЫ, КОЗЫРЬКИ. БЛАГОУСТРОЙСТВО ЗАБРОШЕННЫХ УЧАСТКОВ. ПЕНСИОНЕРАМ – СКИДКИ. Тел. 8-937-942-87-85. 10-20.**

* * *

**Продаю: песок, щебень, гравмассу, бой кирпича. Доставка. Тел. 8-919-650-96-68. 3-12.**

* * *

**Продаю чернозем, торф, асфальтную крошку, щебень, гравмассу, песок, бой кирпича и бетона, вывоз строительного мусора. Тел. 8-917-676-93-79, 8-961-347-25-47. 6-10.**

* * *

**Продаю жилой дом в д. Хорной, земля 40 сот. Тел. 8-905-982-09-99, 8-953-017-80-80.**

* * *

**7 пăруланă хура-шурă тĕслĕ сĕт нумай паракан ĕне сутатăп. Тел. 8-937-015-81-54.**

* * *

**Сумалли ĕне туянатăп. Тел. 8-909-303-20-39.**

**ПРОДАЕМ: ПИЛОМАТЕРИАЛЫ, ВАГОНКУ, ШПУНТ, БЛОКХАУС. Тел. 8-906-130-30-00. 5-10.**

**ПРОДАЮ: ПЕСОК, ОПГС (ГРАВМАССА), ПГС, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ и другое. ДОСТАВКА из с. МОРГАУШИ от 1 до 15 тонн. НЕДОРОГО. Тел. 8-927-862-42-44. 10-10.**

**«ОТДЕЛОЧНИК»**
**СТРОИТЕЛЬНЫЕ МАТЕРИАЛЫ**
**ЦЕМЕНТ М-500 - 250 руб.**
**ПРОФНАСТИЛ ПО РАЗМЕРАМ ЗАКАЗЧИКА, 2 метровый - 502 руб.,**
**УТЕПЛИТЕЛЬ - 400 РУБ.**
**САЙДИНГ - 135 РУБ.**
**ФАНЕРА, ОСП - 485 РУБ.**
**Тел. 8-961-348-66-36, 8-903-322-59-69. 6-10.**

**ОКНА, ДВЕРИ. Гарантия. Качество. НЕДОРОГО. Скидки. Тел. 8-987-579-25-33. 6-10.**

**ПРОДАЕМ В МОРГАУШАХ песок, гравмассу, щебень, бой кирпича, грунт, асфальтную крошку. Доставка. Скидки. Тел. 8-952-758-82-84. 4-10.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ от 150 руб!!! Тел. 8-909-300-33-66. 48-97.**

**ЭЛЕКТРОПАСТУХИ по сниженным ценам. ООО «Агро-Сфера». Тел. 8-987-678-54-59, 8-937-390-37-72. 6-15.**

**Кивелнĕ ЭЛЕКТРОПРОВОДКА – пушар хăрушлăхĕ! Кил-çуртри электропроводкăна, счетчика улăштаратпăр. Тел. 8-937-015-35-40. 3-10.**

**Продаю кур, гусят, утят, мулардов, бройлеров, индюков. Доставка. Тел. 8-909-300-08-18. 8-10.**

* * *

**Продаю сено в рулонах. Возможна доставка. Тел. 8-927-669-42-53. 4-4.**

* * *

**Бройлер, хур, кăвакал, мулард, кăркка чĕпписене сутатпăр. Нумай илекенсене леçсе паратпăр. Килтен те илме пулать. Тел. 8-906-130-82-51, 8-937-395-16-03. Оля. 2-10.**

* * *

**Продаю пшеницу. Возможна доставка. Тел. 8-960-306-88-16. 3-4.**

* * *

**Продаю сено в рулонах. Возможна доставка. Тел. 8-961-338-21-08. 3-3.**

* * *

**Сĕтлĕ ĕнен 3 уйăхри хура-шурă тĕслĕ тына пăрушне усрама сутатпăр. Тел. 8-927-998-26-62.**

* * *

**Пĕр уйăхри тына пăру сутатăп. Тел. 8-937-951-76-10.**

## Объявления

Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; шпунтованные доски, вагонку; цемент, кирпич. Доставка. Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52. 15-20.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Срубы на заказ. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 7-10.

**ПРОДАЮ ГРАВМАССУ, ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ.** Доставка. Недорого. Тел. 8-905-199-69-33. 2-10.

* * *

**ПЕСОК, ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ (известковый, гранитный). ТОРФ. ДОСТАВКА. НЕДОРОГО.** Тел. 8-987-667-42-51. 10-10.

* * *

**Все виды строительных работ** от подрядчика: дома, бани, гаражи, фундамент, забор, кирпичная кладка, кровля любой сложности. Проект, смета – в подарок. Работаем: с материнским капиталом, сельской ипотекой. Рассрочка, кредит. Продаем бетон, профнастил, цемент и т.д. Тел. 8-937-397-08-71, 8-937-940-80-55. 8-10.

* * *

**Песок, щебень, гравмасса, бой кирпича, асфальтная крошка.** Доставка. Тел. 8-927-857-21-33, 8-937-393-37-07. 26-64.

* * *

**Продаю навоз, песок, гравмассу** с доставкой. Недорого. Тел. 8-905-027-37-65. Леонид. 6-12.

* * *

**Продаю навоз, чернозем, торф, песок, гравмассу, грунт, гравий, щебень, бой кирпича.** Доставка. Недорого. Тел. 8-905-198-63-88. Димитрий. 18-25.

* * *

**ПРОДАЮ: ГРАВМАССУ, БОЙ КИРПИЧА, ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ.** Доставка. Недорого. Тел. 8-905-028-22-25. 6-10.

* * *

**Песок, гравмасса от 100 кг.** Доставка. Тел. 8-929-674-97-57, 8-919-669-01-71. 2-10.

## РАБОТА / ĔÇ

**Требуются строительные бригады (3 – 5 человек в бригаде) в Москву: плотники, каменщики, кровельщики, отделочники. Своевременная оплата, трудоустройство. Работа постоянная и круглогодичная. Проживание и питание. Наличие автомобиля и инструментов приветствуется. Тел. 8-985-239–58-96.** 5-5.

**В ООО завод ДСМ-групп (д. Ландыши) требуются слесари МСР, сварщики. Опыт работы 1-3 года. Оформл. по ТК РФ, график работы 5 – 2 с 8.00 до 17.00. З-п от 30000 руб. Тел. 8-927-666-36-06, 8(835) 2626-660. 2-2.**

* * *

**ООО «ТД «МИР» примет на работу машиниста экструдера без вредных привычек. Зарплата своевременная. Подробности по тел: 8(83541)693-43,691-19. 2-3.**

* * *

**В строительную бригаду по строительству деревянных каркасных домов в Московскую область требуются плотники, желательно без вредных привычек. Тел. 8-927-856-47-37.**

**В Торговый центр Моргаушского райпо требуется работник по сборке мебели. График работы с 8 до 17 часов. Выходные дни: суббота и воскресенье. Тел. 8(83541) 62-2-74, 8-927-861-07-72. 1-2.**

Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх ĕçченĕсем хуçалăхра нумай çул ĕçленĕ
**Ефалия Павловна**
**РОЖКОВА**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

«Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕн коллективĕ хуçалăх слесарьте тăрăшнă
**Алексей Юрьевич**
**СОЛОВЬЕВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

«Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕн коллективĕ хуçалăх рабочийĕ
**Геннадий Иосифович**
**ГЕРМАНОВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

## Прогноз погоды

По данным сайта rp5.ru

| | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Явления погоды | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура | +22 | +28 | +35 | +26 | +23 | +29 | +33 | +25 | +19 | +18 | +23 | +17 | +14 | +20 | +23 | +15 |
| Давление | 743 | 743 | 743 | 743 | 742 | 743 | 742 | 741 | 742 | 744 | 746 | 748 | 749 | 751 | 751 | 750 |
| Ветер | 4 | 5 | 7 | 6 | 5 | 5 | 6 | 6 | 4 | 6 | 6 | 4 | 4 | 4 | 4 | 1 |


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.
ЧР Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
Телефонсем: тĕп редактор – 62-1-36, бухгалтери – 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ – 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем – 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction_morgau@mail.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Р– реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: П2851.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ В.Л. Шапошников.
Пичете панă 7.07.2020 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 16 сех. 20 мин., чăннипе – 16 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4222.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.